## ХАЛĂХ ЮРĂÇИНЕ

### (П. ХУСАНКАЙ ПАТĂРЪЕЛНЕ КИЛНĔ ЯТПА)

Сăвăсем хальччен нихçан çырманччĕ,
Тен, çырас тесе те шутламан.
Акă, халь кăвайт ăшра шăранчĕ,
Чи юратнă сăвăçа курсан.

...Клуб кĕрлет уявлă та хаваслă:
Çĕр ĕçченĕ çĕнĕ шут тăвать...
— Петĕр, тух, пĕрре кала мăнаçлăн!—
Пĕр ватти ăна ак йыхăрать.

Чăвашран тухан çынна хистеттĕн
Ĕлĕкех, унран ан пис тесе.
Нихăçан та халăхран иртместĕн,—
Тухрăн эс—вутланчĕç чĕресем...

Юхмаьен çинчен çыратни тăтăш,
Мĕн калас тенийĕ—пурте пур.
Перисем çыраççĕ те йăлт хутăш,—
Анланасшăн тўс кăна хĕн-хур!
Санăнне, пĕрре илтсен те эпĕ,
Ĕмĕр манмăп нихăш сăввуна.
Ку—эмел шерпечĕ пулĕ, тетĕп,
Чун эмел çумришĕн савăнать.

Чечекре паян Митта çĕршывĕ!
Хумханать сар тулă та ыраш...
Ун ятне çĕклет çĕршер хĕр-ывăл.
Ĕç тесен вăл—Аптраман тавраш.

Çав йышра пур эс те Петĕр. Авă—
Кокельпе Талвир, Мишша кунтах...
Партие мухтав!
Ман пурнăç савăк.
Янăрать хитрен тăван сăмах.

Турхан ялĕ, 1966